**Улăхра**

Сарăлать ем-ешĕл улăх
Энĕш шывĕ хĕррипе.
Ун çаранĕ шыв пек тулăх,
Хумханать çил вĕрнипе.

Катаран куçа çиеççĕ
Ытарма çук чечексем.
Вĕсене татса килеççĕ
Пуç кăшăль тума хĕрсем.

Кăшшин-кашшин, янкăс саслăн
Илтĕнет çава сасси.
Каччăпа хĕр ăмăртаççĕ, –
Хыçалта ĕнтĕ каччи!

Çивĕтне вĕлт ывăтать хĕр,
Ах, чипер-çке куçĕсем!
Юратмасăр мĕнле тӳсчĕр
Çулăм чунлă каччăсем!..

Васкатать хĕрсех пĕр йĕкĕт
Çулакан машинăна.
Юрату та çĕнĕ ĕмĕт
Тыткăнланă каччăна.

Ав лере сип-симĕс утă
Тавăрать пĕр ушкăн хĕр.
Чунĕсем хаваслă, çутă,
Ма тесен пуян-çке çĕр!

*Волкова, М. Улăхра / М. Волкова // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. –- [Т. 2] : Поэзи. – С. 351.*